**Улма турачĕсем хуçăлчĕç...**

Сад пахчине лартрăм панулми,

Улмишĕн мар, шурă çеçкишĕн.

Шăвараттăм ăна ирхине,

Каçхине те ăна шăвартăм.

Кашла, кашла, тусăм, эх, кашла!

Сана эп юратса суйларăм.

Пулах мана савăнтармалла,

Шăрăх кун сан айна эп ларăп.

Усрĕ манăн йывăç сарăлса,

Сарлака çулçисемпе калаçса.

Вăхăт çитсен ларчĕ çеçкене,

Савăнмалăх кÿчĕ улмине.

Иртсе çÿрен курчĕ илемне,

Ял ачисем курчĕç улмине.

Чăтаймарĕç мĕскĕн ачисем,

Чечен улма çине уртăнчĕç.

Çемçе чĕрем лăштах çурăлчĕ,

Пуçăм ăнран кайса çаврăнчĕ.

Куçăмсем те тĕтреленеççĕ,

Хуйхă мана пусса антарчĕ.
Пĕчĕкрен юратрăм пĕр хĕре
Ӳссен хамăн тăвасах тесе.
Хурлăх чухне унпа калаçрăм,
Мĕскĕн чуна пусаратчĕ вăл.

Ялти ачасем те ун çине
Хăйсен чăрсăр куçĕсене янине
Туяймарăм пулать - ун çумне
Вĕсем çыпăçмашкăн тытăнчĕç.

Ял ачисем кула пуçларĕç,
Тĕрлĕ усал халап кăларчĕç.
Чĕре çумне çавсем çыпçăнчĕç,
Пит-куçăма ват сан çапăнчĕ.

Панулмишĕн асапланнисем,
Тус тунисем ахалех пулчĕç.
Шăрăхланчĕ çанталăкĕ те,
Ăш-чик йăлтах хурлăхпа тулчĕ.
Мĕншĕн пан улмуçне хуçрĕç-ши?
Ун сулхăнне ларса канăттăм.
Мĕншĕн савнă хĕре илчĕç-ши,
Ăшăма пусарнă пулăттăм!

**1917**

*Милли, А. Улма турачĕсем хуçăлчĕç... / А. Милли // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 75-77.*